Медиа – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Телейлĕ ачалăх çулталăкĕ

**2023 çул Чăваш енре Телейлĕ ачалăх çулталăкĕ ятпа иртет. Кун пирки республика ертӳçи Олег Николаев Хушу алă пуснă.**




Ку темăна суйлани ахаль мар. Республикăра 230 пине яхăн 18 çула çитмен ача пурăнать. Кашни шăпăрланăн ачалăхĕ тăнăçлă тата кăсăклă иртмелле. Ачасене аталанма пур майсем те пулмалла.

«Эпир пурте ачалăхран тухнă»,– тенĕ пĕр ăслă çын, этем пурнăçĕн çак тапхăрĕ çав тери пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса. Ачалăха аса илсен сирĕн куç умне мĕн кăна тухса тăмасть-ши: шывра чăмпăлтатни, вăйăсем выляни, тăвайккинчен ярăнни, ӳкĕм-чӳкĕм туни, кукамай юмахĕсем, хăйăр купи, урамра ачасемпе выляни, шкула çӳрени, анне çумĕнче ачашланни, çунашкапа ярăнни, çумăр айĕнче кӳлленчĕксем тăрăх чупни, тăмран пукане туни, пӳрт умĕнчи йăмра, тарăн çырма тата ытти те. Тимушăн каскăн ĕнипе таркăн качаки…

Ачалăх… Мĕн тери илемлĕ вăхăт! Асамлă та илĕртекен тĕнче! Ачалăх кашни çыннăн чĕринче манса каймалла мар йĕр хăварать. Çав йĕре эпир кашнинчех аса илетпĕр, каласа кăтартатпăр. Ачалăхра юратупа савăнăç, чечеклĕ ĕмĕтсемпе шанăç… Ачалăх кунĕсем – телей. Телейлĕ ачалăх вăл – тăнăç пурнăçра сенкер тӳпе айĕнче хăв юратнă теттесемпе выляма пултарни.

Шкул ачисем хăйсен теттисем пирки каласа парĕç. Вуласа пăхма сĕнетпĕр.

**Раиса ЕРМОШКИНА**

# Юратнă теттесем

Тусăм, упа çури, хурарах хăмăр тĕслĕ, вăтамрах пӳллĕ. Ун костюмĕ шурăпа кăвак тĕслĕ, пысăк тӳмеллĕ. Аппа парнеленĕскер.

Пĕр-пĕрне висĕ çултанпах пĕлетпĕр. Усăлма та пĕрле çӳренĕ. Атте пĕвере пулă тытатчĕ, эпир витрене шутласа яраттăмăр. Çавăнтанах шутлама та вĕрентĕм. Яланах сăвă каласа параттăм ăна, сăпка юрри юрласа çывраттăм.

**Карина ВАСИЛЬЕВА, 6-мĕш класра вĕренекен**

Эпĕ хам теттене питĕ юрататăп. Вăл плюшран çĕленĕ кролик. Эпир унпа халĕ те уйрăлми тус-юлташсем, çемçе минтер çинче хуп турттарнă чухне те, анне пĕçернĕ тутлă кукăльпе вĕри чей ĕçсе ларнă чухне те, пахчара çум çумланă чухне те, шывра чăмпăлтатнă чухне те…

Миша сăрăрах тумпа, хăлхи вăрăм, питне хуплать. Ун пек чухне тусăма хам çума тытса пăчăртаса юратас килет. Вĕренме кайсан та тусăма хамран хăвармăп. Атте парни.

**Валентина ЕФИМОВА, 6-мĕш класра вĕренекен**

Хăй ĕмĕрĕнче вылямалли пистолет тытса курман ача халăхи саманара çук та пулĕ. 6-мĕш класра вĕренетĕп пулин те пушă вăхăтра эпĕ пистолетран персе выляма юрататăп. Ман тетте хура тĕслĕ, пульлисем вара – сарă. Эпĕ пластмасран хатĕрленĕ пульăсемпе мишене тĕл лектерме тăрăшатăп.

Ача чухне вылянни кăна мар, пистолетран тĕл пеме вĕренни куç сивĕчлĕхне ӳстерет, пурнăçра та кирлĕ пулма пултарать. Эпĕ – пулас салтак, Тăван çĕршыв хӳтĕлевçи. Çĕрĕм-шывăм умĕнче тивĕçĕм пысăк. Салтак пулсан та чыса упрас тивĕçĕме çӳллĕ шайра тытса пырасчĕ.

**Игорь ИВАНОВ**

Манăн юратнă тетте пур. Вăл – виçĕ пуçлă çĕлен. Шап-шурă пулнăран ăна Юр пĕрчĕкки ят панă. Вăл хурлăхан пек хуп-хура куçлă, çунаттипе иккĕ сулсах çӳл тӳпене хăпарма пултарать.

Ăна мана аттепе анне çуралнă кунпа парнеленĕ. Вăл манран юласшăн мар, хăнана кайсан та пĕрле пырать.

**Ксения ДМИТРИЕВА, 6-мĕш класра вĕренекен**

Манăн юратнă тетте – Хăрах майăрака. Эпĕ ăна юрататăп. Вăл, юмах тĕнчинчен килнĕскер, мыскараллăскер. Каласа кăтартам-ха.

Ĕпхӳ хулинче юлташăм пурăнать. Вăл Елизавета ятлă. Пĕррехинче вĕсен хулине Карина Кросс, Хăрах майăрака теттесемпе чапа тухнăскер, килнĕ иккен. Чиперкке пĕрне Лизăна парнеленĕ.

Лиза çулла яла килчĕ. Вылянса кĕрсе кайрăмăр та юлташăм теттине пылчăка укерчĕ. Хăрах майăрака лăпăр-лăпăр…

Аякри тусăм пăрахса хăварнă теттене çуса тасатрăм, çемçе алшăллипе шăлса типĕтрĕм, мамăк тултартăм.

Хăрах майăрака çилхийĕпе хӳри çутăрах кĕрен тĕслĕ, хăй шап-шурă. Хура куçлă. Симĕс, сарă майăрака, кĕрен, сарă çунат. Пысăках мар. Вăл ман сĕтел патĕнчи стена çинче çакăнса тăрать. Урок тума пулăшать. Эпĕ ăна кăмăллатăп.

**Дарья КУЛИКОВА, 6-мĕш класс**



# «МедиаВзлет» асра юлчĕ

Мана Любовь Ермошкина тесе чĕнеççĕ. Санарпуç вăтам шкулĕн 9-мĕш класĕнче вĕренетĕп. Кăçал, 2023 çулхи нарăспа пуш уйăхĕсенче, регионсен шайĕнче «МедиаВзлет» ятпа ачасемпе çамрăксен медиапроекчĕсен фестиваль-конкурсĕ иртрĕ. Эпĕ те хутшăнса пăхма кăмăл турăм.

Конкурса «Çĕнтерӳ çулĕ» район хаçачĕнче пĕлтĕр пичетленсе тухнă «Фронтпа тыл паттăрĕсене тайма пуç!» ятлă тĕрленчĕке тăратрăм.

Ака уйăхĕнче шкула лайăх хыпар çитрĕ. Эпĕ конкурсăн «Хаçатра чăвашла çапăнса тухнă чи лайăх ĕç» («Лучшая печатная публикация на чувашском языке») номинацире çĕнтерӳçĕ пулса тăтăм.

«МедиаВзлет» конкурсра мала тухнă ачасемпе çамрăксене ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче пултаруллă çамрăксемпе есçлекен «Эткер» центрта чысларĕç.

Çак кун ман асăмра яланлăхах тăрса юлĕ. Эсир пĕлетĕр-и, чĕрем кăкăртан сиксе тухас пекех тапрĕ, ĕмĕтĕме çунатлантарчĕ.

Хам ĕмĕрте пĕрремĕш хут Чăваш ен Пуçлăхне Олег Николаева, Раççей телевиденийĕнче «Дисней», «Карусель» ача-пăча передачисене ертсе пыракан режиссера, Антон Михалева, журналистсене тата ытти чаплă хăнасене куртăм.

Хаклă парнесене тивĕçрĕм. Халĕ манăн та блогерсем те усă куракан çавра лампа (кольцевая лампа), микрофон пур. Ĕçле те ĕçле, малалла аталан, ан ӳркен кăна.

Санарпуçĕнчи вăтам шкулăн медиацентрĕн ертӳçине Семенова Ирина Геннадиевнăпа чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ермошкина Раиса Николаевнăна, шкул ачисене воспитани парас енĕпе вăй хуракан директор çумне Федорова Галина Геннадьевнăна чунтан-чĕререн тав тăватăп. Весем шкул ачисемпе тăрăшса ĕçлеççĕ, ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама хавхалантарса пыраççĕ.

ВĔРЕНТЕКЕНПЕ НАСТАВНИК ÇУЛТАЛĂКĔ

# Кам-ха вăл вĕрентекен?

Ман шутпа, вĕрентекен – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине тăратакан. Вăл пирĕншĕн – çывăх та юратнă çын.

Кашни çыннăн пурнăçĕнче вĕрентекен пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Пирĕн шкулта питĕ лайăх учительсем пур. Мана ытларах Марина Анатольевна Федорова килĕшет. Вăл хура çӳçлĕ, хăмăр куçлă, питĕ кăмăллă, илемлĕ, йăрăс пӳллĕ. Марина Анатольевна истори, обществознани предмечĕсене вĕрентет. Çирĕп ыйтать. Уроксенче питĕ нумай дата тата событи пĕлетпĕр. Вăл тăрăшнипе вĕренекенсем районти олимпиадăсене хутшăнаççĕ, лайăх вырăнсем илеççĕ.

**Серафима ФАДЕЕВА, 7-мĕш класра вĕренекен**

# Пурнăç урокĕсем

Ман юратнă учитель – Скворцов Валерий Геннадьевич. Вăл шкулта технологи урокĕсене ертсе пырать.

Ылтăн алăллă çын пулнăран Валерий Геннадьевича шкулта пурте хисеплеççĕ. Вăл ăсталама пĕлмен япала çук та пуль: пуртă аври тумалла-и унта, пăчкă шăлне хăйрамалла-и е пĕр-пĕр станокпа ĕçлемелле-и… Ун алли пултаракан ĕç-хĕлĕн вĕçĕ-хĕрри те çук…

Кĕреçе, щетка аври лартма та, ывăс тума та, пуртăпа каскалама та вĕрентĕмĕр.

Валерий Геннадьевич урокĕсем – пурнăç урокĕсем. Вĕсем пирĕншĕн – ĕмĕре.

**Алексей АНТОНОВ, 9-мĕш класра вĕренекен**

# Тетте çыхатăп

Эпĕ çекĕлпе çыхма юрататăп. Нумаях пулмасть плюш çиппрен тигр çури, хăрах майăрака тата упа çури çыхнăччĕ. Тигр çури сенкер тĕслĕ, хăмăр йăрăмлă. Хăрах майăрака вара сутă кĕренрех, куçĕ савăнăçпа тулнă. Упа çури тĕксĕм кĕрен, майне хĕрлĕ хăю çыхнă. Хам алăпа çыхнă теттесемпе выляма юрататăп, мĕншĕн тесен вĕсене ыр кăмăлпа ăсталарăм.

Ал ĕç тума пĕлни пурнăçра кирлĕ. Тавракурăма та аталантарать.

**Анна ГРИГОРЬЕВА, 6-мĕш класра вĕренекен**

ПАТРИОТИЗМ

# Эпĕ – параппанçă

Эпĕ кадет класĕнче вĕренетĕп. Пирĕн отряд шыв айĕн ишекен «Курск» крейсер карап çинче çарта тăнă хастар моряк Виктор Сидюхин ячĕпе хисепленет. Эпир район тата республика шайĕнче иртекен çар вăййисемпе конкурсĕсене тăтăшах хутшăнатпăр, çĕнтерӳпе таврăнатпăр. Пире вĕрентсе хавхалантарса пыракан Марина Анатольевна Федорова класс ертӳçи.

Мĕне кăна вĕрентмест пулĕ пире ăста педагог. Вăл тăрăшнипе эпир стройпа утма, тĕрлĕ команда пурнăçлама, тинĕс «тĕвви» тума, параппан çапма вĕрентĕмĕр… Каласа та пĕтерес çук.

Параппан тенĕрен… Мĕн-ха вăл? Кукаçи-кукамайран ыйтас пулсан вĕсем параппан юмаххине ярса парĕç-ха: пионер лагерĕ, ирхи зарядка, горнпа параппан сасси…

Эпир, çамрăк ăру, кун пирки мĕн пĕлетпĕр-ха?

Интернет усăхне «хăпарса кайса» эпĕ акă мĕн пĕлтĕм.

Параппан Европăна çывăх Хĕвелтухăçĕнчен килнĕ музыка инструменчĕ-мĕн. Параппана Раççейре Пĕрремĕш Петĕр патшана ларичченех çапăçусенче усă курнă имĕш. Ун сасси салтаксене тăшмана тапăнма, строя тытса пыма, паттăр пулма хавхалантарнă.

Параппан калама çăмăлах мар. Кунта ăслай кирлĕ. Çамрăк параппанçăн мĕн пĕлмелле?

Музыка инструменчĕн патакĕсене шакканă май кĕвĕлĕхпе чепетлĕхе тытса пымалла. Патаксен пĕр çĕре çапăнмалла – вара тин пĕрешкел сасă-кĕвĕ пулать.

Параппан çапнă чухне эпĕ канатăп. Çав хушăрах ăшăмра «Эпĕ – параппанçă» текен мăнаçлăх туйăмĕ хусçаланать. Параппан сассипе чĕре таппи пĕр кĕвве чăмăртанса ĕмĕтсене çунатлантараççĕ.

Шкулсенче çак инструмента «канлĕ ыйхăран» вăратсан аван пулмалла та çав. Параппан юлташне – горна та. Асатте-кукаçисен телейлĕ ачалăх тĕнчине тавăрнар, кăвайтне чĕртсе ярар!

**Дарья АЛЕКСАНДРОВА, 7-мĕш класра вĕренекен**

# Паттăр ячĕпе – аллея

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем Кăмаш ялĕнче çуралса ӳснĕ Александр Никонов – Украинăри спецоперацие хутшăнса пуçне хунă çар çыннин, Раççей Федерацийĕн «Барс» ятпа çӳрекен 26-мĕш ятарлă отряд разведчикĕн – вилтăприйĕ çинче пулчĕç. Ачасем палăк умне чечек çыххи хучĕç, çапăçура хăюлăх кăтартса Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă ентешемĕрĕн хисеплĕ ятне çӳллĕ шайра тытма сăмах пачĕç!

Çак кун паттăр салтак ячĕпе Астăвăм аллейи уçăлчĕ. Мероприятире Мăн Турхан территори пайĕн пуçлăхĕ Олег Григорьев, районтан килне хаклă хăнасем Алексей Фирсов, Сергей Ермошкин, Александр Никоновăн тăванĕсем, юлташĕсем хĕрӳллĕ сăмах каларĕç, çамрăк ăрăва таса чунлă, шанчăклă юлташ, Раççейĕн тивĕçлĕ гражданĕсем пулма чĕнсе каларĕç.

А.В. Никонов ячĕпе хисеплене тăракан отряд ятĕнчен Татьяна Большакова «Вĕлкĕшет ялав, вĕлкĕшет» калавпа паллаштарчĕ. Хайлав кашни çын чун-чĕри витĕр тухрĕ, куçран куççуль тумлатрĕ – хастарлăх туйăмне вăратрĕ.

Аллейăна асăнмалăх туя йывăççи – Александр салтакăн вилĕмсĕрлĕхне кăтартса паракан «пурнăç йывăççи» – лартрĕç. Паттăрсен ячĕ, сутă сăнарĕ яланах халăх чунĕнче упранĕ.

6-мĕш класс маттурĕсем Александр Никоновăн çуралнă кил-çуртĕнче хăнара, унăн пӳлĕмĕнче пулса курчĕç. А. Никонов ашшĕпе амăшĕ Виталий Александровичпа Галина Дмитриевна Сашăн ачалăхĕпе, çар хĕсметĕнчи пурнăçĕпе паллаштарчĕç. Ачасем хăйсен пурнăçĕнче пĕрремĕш хут бронежилет тытса курчĕç, салтакăн тĕрлĕ-тĕрлĕ тум-тирне пăхса тĕлĕнчĕç.

Çак кун çамрăк ăру асĕнче яланлăхах тăрса юлĕ! Çĕре çити пуçа таятпăр сирĕн умăрта, хисеплĕ салтак амăшĕ, хисеплĕ салтак ашшĕ!

**Раиса ЕРМОШКИНА**